К 814ув-2
А 65
Ч-42687

Е. А. Андреева

# ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИ СИНТАКСИСĔ

ТЕКСТСЕН ПУХХИ

Шупашкар 2009

Национальная библиотека ЧР
4-042687

Обязат. экз.

Раççей Федерацийĕн Вĕрентӳпе ăслăлăх министерстви

Вĕрентӳ ĕçĕн федераллă агентстви

Аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ

«И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ»

## Е. А. Андреева

# ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИ СИНТАКСИСĔ

## ТЕСТСЕН ПУХХИ

Вĕрентӳпе меслетлĕх пособийĕ

Чăваш филологи факультечĕн студенчĕсем валли

Шупашкар 2009

УДК 811. 512 111' 361. 335
ББК 81. 635. 1-923-22
А 655

Андреева, Е. А. Хутлă предложени синтаксисĕ. Тестсен пуххи : вĕрентӳпе меслетлĕх пособийĕ : чăваш филологи факультечĕн студенчĕсем валли / Е. А. Андреева. – Шупашкар : Чăваш патшалăх педагогика университечĕ, 2009. – 62 с.

И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн ăслăлăх канашĕ пичете сĕннĕ

Рецензентсем:

**Сергеев Л. П.**, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн чăваш чĕлхи кафедрин профессорĕ;

**Кузнецов А. В.**, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх аслă ĕçтешĕ.

ПРОВЕРЕНО
2010

Вĕрентӳпе меслетлĕх пособийĕнче хальхи чăваш чĕлхинчи хутлă предложени тата пунктуаци ыйтăвĕсемпе çыхăннă тестсене панă. Вĕсемпе усă курса вĕренекенсен пĕлӳ шайне тĕрĕслеме пулать.

Ку кĕнекепе чăваш филологи факультечĕн студенчĕсем тата вăтам шкулăн аслă класĕсенче вĕренекенсем усă курма пултараççĕ.

© Андреева Е. А., 2009
© Аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ «И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ», 2009

Ч-42687
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

## УМĔН КАЛАНИ

Вĕренӳ планĕпе килĕшӳллĕн хальхи чăваш чĕлхинчи хутлă предложенисен уйрăмлăхĕсене, вĕсен тĕсĕсене чăваш филологи факультечĕн студенчĕсем пиллĕкмĕш курсра вĕренеççĕ. Теори материалне ăша хывса унпа пуплевре усă курма хăнăхаççĕ: илемлĕ хайлавсенчен хутлă предложни тĕслĕхĕсене çырса илсе тишкереççĕ, вĕрентекен сĕннĕ предложенисене хак параççĕ, тулли тишкерӳ тăваççĕ, чарăну палли лартмалли уйрăмлăхсене палăртаççĕ т. ыт. те.

Вĕренекенсен пĕлĕвне тĕрĕслесси тĕрлĕ майпа пулса пырать: ыйту-хурав мелĕпе, тĕрĕслев ĕçĕсем е рефератсем урлă. Юлашки вăхăтра вĕрентӳ ĕçĕнче пĕлĕве тестсемпе тĕрĕслесси йăлана кĕре пуçларĕ. Пирĕн шутпа, ку формăпа усă курни чылай чухне пысăк пулăшу парать тата вĕрентӳ ĕçне нумай çăмăллатать, çĕнĕлĕх кĕртет. Çав вăхăтрах вĕренекенсен пĕлĕвне пур енлĕн тĕрĕслеме пулăшать, вĕрентекенĕн вăхăтне перекетлет. Ытти мелсемпе танлаштарсан пĕлĕве баллсемпе усă курса хаклани вĕрентӳ тапхăрĕ мĕнле шайра пынине тарăнрах çутатса парать.

Пирĕн кĕнекери тестсен тытăмĕ, вĕсенчи ыйтусем тĕрлĕрен. Вĕсем, тĕпрен илсен, хутлă предложени синтаксисĕпе тата пунктуаципе çыхăннă теори ыйтăвĕсене вĕренекенсем мĕнле шайра пĕлнине те, пухнă пĕлӳпе пуплевре епле усă курма пултарнине те кăтартса пама май параççĕ. Унсăр пуçне, кунта çыхăнуллă пуплеве аталантарма пулăшакан тестсен тĕслĕхĕсем те пур.

Тестсемпе уйрăм темăна, е пĕр-пĕр пысăк пая, е хутлă предложенисем çинчен вĕреннине пĕтĕмлетнĕ чух усă курма юрать. Вĕсем вĕреннĕ материала çирĕплетнĕ е аса илнĕ тапхăрта та усă курма юрăхлă.

Пирĕн шутпа, чăваш чĕлхин синтаксисне вĕрентнĕ чух пĕлĕве тестсемпе усă курса тĕрĕсленин пĕлтерĕшĕ пысăк, çавăнпа та ку формăпа тăтăшах усă курмалла.

## I. ТЕСТ – ПĚЛĚВЕ ТĚРĚСЛЕМЕЛЛИ ТУХĂҪЛĂ МЕЛ

Хальхи вăхăтра чăваш чĕлхин синтаксисне вĕрентнин тĕп тĕллевĕ – студентсен пуплевне якатса пуянлатасси, вĕсене хăйсен шухăшне ҫыхăнуллă ҫырса е сăмах вĕҫҫĕн палăртма хăнăхтарасси, чĕлхепе усă курса информаци пухма вĕрентесси, тăван халăхăн пуян историйĕпе, культурипе паллаштарса ăша хывтарасси. Ку ĕҫе тĕрĕс пурнăҫласси чи малтан вĕрентекенрен килет, мĕншĕн тесен ҫамрăксене чи малтан пĕлӳ пухма пулăшмалла тата ăна вăхăтра тĕрĕслесе тăмалла. Пĕлĕве тĕрĕслессине тĕрлĕ мелпе усă курса йĕркелеме пулать. Ҫак мелсене икĕ ушкăна уйăрма пулать: йăлана кĕнисем (ыйтса калаттарни, диктантсем, изложенисемпе сочиненисем ҫыртарни) тата пĕлĕве ҫĕнĕлле тĕрĕслеме май параканнисем (тестсем).

Сăнаса тишкерӳсем тунă хыҫҫăн эпир ҫакна палăртма пултаратпăр: йăлана кĕнĕ тĕрĕслев мелĕсем пур чухне те пĕлĕве туллин хаклама май параймаҫҫĕ, вĕрентӳ процесĕн хăш тапхăрĕнче вĕренекенсем такăннине кăтартма пултараймаҫҫĕ. Пĕлĕве тĕрĕсленĕ чух тестсемпе усă курни чылай чухне пысăк пулăшу парать тата чăваш чĕлхине вĕрентес ĕҫе нумай ҫăмăллатать, ҫĕнĕлĕх кĕртет. Ҫав вăхăтрах вĕренекенсен кăмăлне хăпартать, вĕсен пĕлĕвне пур енлĕн тĕрĕслеме пулăшать, вĕрентекенĕн вăхăтне те перекетлет. Тестсен тытăмĕ, вĕсенчи ыйтусем тĕрлĕрен пулма пултараҫҫĕ. Пĕлĕве тестсемпе тĕрĕсленĕ чух вĕрентĕвĕн тапхăрне те, вĕренекенсен пĕлӳ шайне те шута илмелле.

Ытти мелсемпе танлаштарсан пĕлĕве баллсемпе усă курса хаклани вĕрентӳ тапхăрĕ мĕнле шайра пынине тарăнрах ҫутатса пама пулăшать.

Тестсем темиҫе тĕрлĕ пулаҫҫĕ: нормативлисем, критерилисем, стандартлисем. Вĕренекен балĕсене пĕр-пĕр ушкăнри ҫынсен балĕсен вăтам кăтартăвĕпе танлаштарса ирттернĕ теста нормативлă теҫҫĕ. Тепĕр

майлă каласан, çак теста хуравланă çынсен вăтам кăтартăвĕ норма пулса тăрать. Ку норма вара çак ушкăнри хуравсен типлă шайĕ шутланать. Пĕр çын пухнă баллсене нормăпа танлаштарнă хыççăн вăл е ку вĕренекенĕн балĕсен шучĕ нормăран пысăк е пĕчĕк пулнине курма пулать.

Нормативлă тестсем вĕренекенсен нумай енлĕ пултарулăхне хăвăрт тĕрĕслеме май параççĕ. Вĕсем йывăртарах чĕлхе материалне тĕрлĕ майсемпе вĕреннĕ чух тивĕçлĕ вырăн йышăнаççĕ.

Вĕренекенсен результатне пĕр улшăнман хатĕр стандартпа танлащтарамалли тестсене критериллĕ теççĕ. Вĕсем палăртнă вăхăтра вĕренекен мĕн пĕлнипе пĕлменнине тĕплĕн кăтартса пама пултараççĕ. Тĕслĕхрен, пĕр-пĕр темăпа 20 тест ыйтăвĕ хатĕрленĕ. Çав ыйтусенчен вун çиччĕшне хуравланă пулсан вĕренекенĕн пĕлĕвĕ çителĕклĕ пулни курăнать. Критерисене палăртнă чух вĕрентекен ытти ушкăнсем мĕнле ĕçленине те шута илет, танлаштарать.

Стандартлă тестсене пуриншĕн те паллă нормăсене пăхăнса хатĕрлеççĕ. Кун пек тестсене вĕрентӳ программин стандарчĕпе шайлаштараççĕ. Вĕсем вĕренекенсен пĕлĕвĕн, пултарулăхĕн хăш-пĕр енĕсене тĕрĕслесе палăртмалли ĕçсен пуххи пулма пултараççĕ. Çак тестсемпе вĕренекенсен пĕлĕвне тивĕçлĕ хаклаççĕ, пĕлӳ шайне баллсемпе е очкосемпе палăртаççĕ. Стандартлă тестсем шутĕнче пĕлĕве тĕрĕслемеллисем, пултарулăха палăртмаллисем, диагностика тесчĕсем пур.

Ытларах чухне вĕрентекенсем пĕтĕмĕшле пĕлĕве тата пултарулăха тĕрĕслемелли тестсемпе усă кураççĕ. Пĕтĕмĕшле пĕлĕве тĕрĕслемелли тестсем шутне вĕрентӳ программинче палăртнă пĕр-пĕр темăпа е уйрăм пайпа çыхăннă ыйтусене кĕртеççĕ. Кун йышши тестсене пĕтĕм ушкăнпа е уйрăммăн ирттерме пулать.

Диагностика тесчĕсем ытларах чухне вĕренекенсем вĕрентӳ процесĕн хăш тапхăрĕнче такăннине, мĕнле ыйтусене çителĕклĕ таран ăнланманнине палăртма пулăшаççĕ.

Пултарулăха тĕрĕслемелли тестсем вара вĕренекенсен малашлăхри ĕç ăнăçлăхне çутатса пама пулăшаççĕ. Енчен те пĕтĕмĕшле пĕлĕве тĕрĕслемелли тестсем пĕр-пĕр темăпа çыхăннă пĕлĕве палăртаççĕ пулсан пултарулăх тесчĕсем вĕренекен малашне вĕренӳре еплерех ĕлкĕрсе пыма пултарнине курма май параççĕ.

## II. ПĔЛĔВЕ ТĔРĔСЛЕМЕЛЛИ ТЕСТСЕМ

### 2.1. ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИН ПĔТĔМĔШЛЕ ЫЙТĂВĔСЕМ

**1. Мĕн вăл хутлă предложени?**

а) подлежащипе сказуемăй ҫыхăнăвĕ
ă) икĕ е темиҫе хутсăр предложени пĕрлĕхĕ
б) тĕп членсемпе кĕҫĕн членсен ҫыхăнăвĕ
в) кăткăсланнă хутлă предложени

**2. Хутлă предложенисене чăваш чĕлхинче мĕне кура ушкăнлаҫҫĕ?**

а) вĕҫленнĕ интонацие кура б) ҫыхăну мелне кура
ă) чарăну паллине кура в) пĕлтерĕшне кура

**3. Хутлă предложени пайĕсене ҫыхăнтаракан мелсене тупăр.**

а) татăксем, междометисем
ă) хыҫ сăмахсем, союзла сăмахсем, союзсем, падеж аффиксĕсем
б) сăпат аффиксĕсем, татăксем, междометисем
в) сăпат аффиксĕсем

### 2.2. Хутлă предложени тĕсĕсем

**1. Сыпăнтаракан союзсем шутне хăшĕсем кĕреҫҫĕ?**

а) пĕрре-тепре, пĕр-пĕр, е, те
ă) та (те), тата, ни
б) анчах, ҫапах, унсăрăн, атту
в) мĕншĕн тесен

**2. Сыпăнуллă союзсемпе ҫыхăнакан хутсăр предложенисен пĕрлĕхне мĕн теҫҫĕ?**

а) пăхăнуллă хутлă предложени
ă) союзсăр хутлă предложени

б) сыпăнуллă хутлă предложени
в) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени

**3. Мĕнле союзсемпе ҫыхăнакан хутсăр предложенисем ылмашăнса пыракан ĕҫсене сăнлаҫҫĕ?**

а) сыпăнтаракан союзсемпе (та (те), тата, ни)
ă) уйăракан союзсемпе (пĕрре-тепре, те-те)
б) хирĕҫлекен союзсемпе (анчах, ҫапах, унсăрăн)
в) пăхăнуллă союзсемпе

**4. Мĕнле союзсем пĕр вăхăтри е умлăн-хыҫлăн пулакан ĕҫсене сăнлакан хутсăр предложенисене ҫыхăнтараҫҫĕ?**

а) та (те), тата б) пĕрре-тепре, те-те
ă) анчах, ҫапах, атту в) унсăрăн

**5. Сыпăнуллă хутлă предложенин уйрăмлăхĕсене тупăр.**

а) пĕр пайĕ тепĕр пайне пăхăнать, пайĕсем аффикссемпе, хыҫ сăмахсемпе ҫыхăнаҫҫĕ

ă) пайĕсем пĕр шайра тăраҫҫĕ, пĕри теприне пăхăнмасть, пайĕсем сыпăнуллă союзсемпе ҫыхăнаҫҫĕ

б) пайĕсем пĕр-пĕрне пăхăнмаҫҫĕ, интонаци пĕрлĕхĕпе ҫыхăнаҫҫĕ

в) пĕр пайĕ теприн варрине кĕрсе ларма пултарать

**6. *Ҫитрĕ ĕнтĕ ҫимĕк те, хĕрĕн туйне тумалла.* Ку предложенире *те* сăмах мĕн пулать?**

а) сыпăнуллă союз б) татăк
ă) хыҫ сăмах в) пăхăнуллă союз

**7. Пăхăнуллă хутлă предложенин пайĕсем мĕнле мелпе ҫыхăнма пултараҫҫĕ?**

а) вырăнĕ-йĕркипе, аффикссемпе, хыҫ сăмахсемпе
ă) сыпăнтаракан союзсемпе
б) интонаци пĕрлĕхĕпе
в) хирĕҫлекен союзсемпе

**8. Çак предложенисем хăш ушкăна кĕреççĕ?**

*Йĕпе-сапа пулас умĕн ирхине тăри юрламасть.*
*Çанталăк хĕвеллĕ чух пахчари ĕçсене туса пĕтересчĕ.*
*Мĕн чухлĕ ĕçлетĕн, çавăн чухлĕ вăй кĕрет.*

а) сыпăнуллă хутлă предложенисем
ă) пăхăнуллă хутлă предложенисем
б) союзсăр хутлă предложенисем
в) хутсăр предложенисем

**9. Пăхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ мĕнрен килет?**

а) тĕп предложени ыйтăвĕнчен
ă) çыхăну мелĕнчен
б) вăл шухăшĕ енчен тĕп предложенипе мĕнле шайлашса тăнинчен
в) чарăну палли лартнинчен

**10. Союзсăр хутлă предложенири хутсăр предложенисем мĕнпе çыхăнаççĕ?**

а) вырăнĕ-йĕркипе б) аффикссемпе
ă) интонаци пĕрлĕхĕпе в) хыç сăмахсемпе

**11. Подлежащи пĕлтерĕшлĕ пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе мĕнле мелпе çыхăнать?**

а) -и аффикспа, союзла сăмахсемпе
ă) пăхăнуллă союзсемпе, вырăнĕ-йĕркипе
б) вырăнĕ-йĕркипе, хыç сăмахсемпе
в) интонаци пĕрлĕхĕпе

**12. Определени пĕлтерĕшлĕ пăхăнуллă предложенин хутлă предложенири вырăнĕ мĕнле пулать?**

а) тĕп предложени умĕн тăрать;
ă) тĕп предложени хыççăн тăрать;

б) яланах хăй ăнлантаракан сăмахсем умĕн тă-рать;

в) тĕп предложени варринче тăрать.

**13. Союзла сăмахпа çыхăнакан пăхăнуллă предложенипе тĕп предложени хушшине мĕнле чарăну палли лартаççĕ?**

а) запятой б) икĕ точка

ă) тире в) точкăпа запятой

**14. Союзсăр хутлă предложенисем сыпăнуллă хутлă тата пăхăнуллă хутлисенчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?**

а) пĕлтерĕшĕпе

ă) пайĕсен вырăнĕпе

б) куçа курăнакан çыхăну мелĕ çуккипе

в) чарăну палли лартассипе

**15. Çак союзсăр хутлă предложенисем пĕлтерĕшĕ енчен мĕнле хутлă предложенисене аса илтереççĕ?**

1. *Санюк сисрĕ: пуху вĕçленсе пырать.*

2. *Натюш çакна ăнланчĕ: ун çулĕ çинче хăрушă çын.*

а) сыпăнуллă хутлă предложенисене

ă) пăхăнуллă хутлă предложенисене

б) 1-мĕшĕ – сыпăнуллă хутлă предложение, 2-мĕшĕ – пăхăнуллине

в) 1-мĕшĕ – пăхăнуллă хутлă предложение, 2-мĕшĕ – сыпăнуллине

**16. Союзсăр хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисем пĕр еверлĕрех ĕçсене е пулăмсене сăнланă чухне вĕсем хушшине мĕнле чарăну палли лартаççĕ?**

а) запятой б) икĕ точка

ă) тире в) тире тата запятой

**17. Пăхăнуллă хутлă предложенин пайĕсем пĕр-пĕрин хыççăн вĕçе-вĕçĕн те вырнаçма пултараççĕ, пăхăнуллă пред-**

ложени тĕп предложени варринче те тăма пултарать. Тĕп предложени вара нихçан та пăхăнуллин ... тăма пултараймасть... Мĕнле сăмах сиксе юлнă?

а) умĕнче б) варринче
ă) вĕçĕнче в) пуçламăшĕнче

18. Хутлă предложени:

а) 2 е темиçе хутсăр предложенирен тăрать
ă) 1 хутсăр предложенирен тăрать
б) подлежащипе сказуемăй пĕрлешĕвĕнчен тăрать
в) 2 е темиçе сăмах пĕрлешĕвĕнчен тăрать

19. Çак тĕслĕх мĕнле предложени пулать?

*Куç курать те, шăл витмест.*

а) хутсăр б) пăхăнуллă хутлă
ă) сыпăнуллă хутлă в) союзсăр хутлă

20. Çак тĕслĕхсенчен хăшĕ хутлă предложени пулать?

1) *Лаша тăват уараллă, çапах такăнать.*
2) *Вăл вăтăрсенчен те иртеймен пулас-ха, çапах пичĕ пĕркеленме ĕлкĕрнĕ.*
3) *Вăйсăрччĕ эпир, çавăнпа хыттăн аташмарăмăр.*
4) *Вăл сывă, илемлĕ, çапах телейсĕр.*

а) 1 ă) 2 б) 3 в) 4

21. Хутлă предложенири хутсăр предложенисене миçе мел çыхăнтарать?

а) 8 ă) 5 б) 6 в) 7

22. Çак хутлă предложенири хутсăр предложенисем мĕнле мелпе çыхăннă?

*Кам йывăр вăхăтра халăхран уйрăлса каять, вăл пĕтет.*

а) вырӑнӗ-йӗркипе б) союзла сӑмахпа
ӑ) союзпа в) аффикспа

**23. Ҫак предложенисем хутлӑ-и хутсӑр-и?**

1) *Ху лайӑх та, ҫын та лайӑх.*
2) *Ху лайӑх пулсан ҫын та лайӑх.*

а) пӗрремӗшӗ ҫеҫ хутлӑ
ӑ) иккӗмӗшӗ ҫеҫ хутлӑ
б) иккӗшӗ те хутсӑр
в) иккӗшӗ те хутлӑ

**24. Чӑваш чӗлхинчи хутлӑ предложенисене миҫе ушкӑна уйӑраҫҫӗ?**

а) 2 ӑ) 3 б) 4 в) 5

**25. Ҫак тӗслӗх мӗнле предложени пулать?**

*Пӗр-ик тапхӑр ҫил вӗрсен шӑп шӑпланчӗ сӗм вӑрман.*

а) сыпӑнуллӑ хутлӑ б) союзсӑр хутлӑ
ӑ) пӑхӑнуллӑ хутлӑ в) хутсӑр

**26. Ҫак предложенисенчен хӑшӗ хутлӑ?**

1) *Хӗле хирӗҫ ҫуна хатӗрле.*
2) *Хӗл ҫитиччен ҫуна хатӗрле.*
3) *Хӗле кӗтсе ҫуна хатӗрле.*
4) Хӗле кӗтмесӗр ҫуна хатӗрле.

а) 1 ӑ) 4 б) 3 в) 2

**27. Ҫак предложенисенче запятой кирлӗ-и, кирлӗ мар-и?**

1. *Ҫиччӗ виҫ те пӗрре кас.*
2. *Каҫа хирӗҫ тухӑҫ енчен тӗксӗм пӗлӗтсем капланса килчӗҫ те ҫумӑр пӗрӗхкелеме пуҫларӗ.*

а) 1-мĕшĕнче – кирлĕ, 2-мĕшĕнче – кирлĕ мар
ă) 1-мĕшĕнче – кирлĕ мар, 2-мĕшĕнче – кирлĕ
б) иккĕшĕнче те кирлĕ
в) иккĕшĕнче те кирлĕ мар

**28. *Хĕвел пĕрре кăна та этем нумай* предложенире мĕнле чарăну палли лартма юрать?**

а) запятой çеç б) запятой та, тире те
ă) тире çеç в) чарăну палли кирлĕ мар

**29. Пăхăнуллă хутлă предложенин пайĕсене мĕнле мелсем çыхăнтарассĕ?**

а) пăхăнуллă союз, союзла сăмах, хыç сăмах, аффикс, пайĕсен вырăнĕ-йĕрки
ă) интонаци пĕрлĕхĕ, сыпăнуллă союзсем
б) *та, те, тата* союзсем
в) *атту, унсăрăн, çапах* союзсем

**30. *Ирхине сывлăм нумай ўксен çанталăк лайăх пулать* хутлă предложенин пайĕсене мĕн çыхăнтарать?**

а) союз б) аффикс
ă) хыç сăмах в) пайсен вырăнĕ-йĕрки

**31. Çак ваттисен сăмахĕсенчен хăшĕ пăхăнуллă хутлă предложени пулать?**

1) *Çырма пĕлни сахал, пĕлсе çырни кирлĕ.*
2) *Алă тивменни аллă çул выртать.*
3) *Пур пĕрле, çук çурмалла.*
4) Çумăр çунă, сывлăш тусанран тасалнă.

а) 1 ă) 3 б) 2 в) 4

**32. Хутлă предложенире пăхăнуллă пайĕ ăçта тăма пултарать?**

а) тĕп пай умĕнче
ă) тĕп пай хыçĕнче

б) тĕп пай варринче
в) тĕп пайĕ умĕнче те, хыçĕнче те, варринче те

**33. Çак тĕслĕхре пăхăнуллă пайĕ пĕлтерĕшĕ енчен предложенин мĕнле членĕпе тӳр килет?**

*Ача-пăча калаçни пахчара ян-ян каять.*

а) дополнени б) подлежащи
ă) сказуемăй в) обстоятельство

**34. Тĕслĕхри пăхăнуллă предложени мĕнле пĕлтерĕшлĕ пулать?**

*Йăмăк парнеленĕ тутăра анне яланах юратса çыхать.*

а) подлежащи б) определени
ă) сказуемăй в) дополнени

**35. Тĕслĕхри пăхăнуллă предложени мĕнле ыйтура тăрать?**

*Хĕвел анаспа кĕтӳ яла таврăнчĕ.*

1) Кĕтӳ мĕн турĕ?
2) Хĕвел анаспа яла мĕн таврăнчĕ?
3) Кĕтӳ яла хăçан таврăнчĕ?
4) Кĕтӳ ăçта таврăнчĕ?

а) 1 ă) 2 б) 3 в) 4

**36. Союзсăр хутлă предложенири хутсăр предложенисене пĕр-пĕринпе мĕн çыхăнтарать?**

а) интонаци пĕрлĕхĕ б) аффикс
ă) пайсен вырăнĕ-йĕрки в) хыç сăмах

**37. Союзсăр хутлă предложенисенче хутсăр предложенисем хушшине миçе тĕрлĕ чарăну палли лартма пулать?**

а) 2   ӑ) 4   б) 5   в) 1

**38. Ҫак предложенире мӗнле чарӑну палли кирлӗ?**

*Тӑрӑ сывлӑшра кайӑксем юрлаҫҫӗ хула янӑрать.*

а) запятой   б) тире
ӑ) икӗ точка   в) запятой та, тире те

**39. Ҫак предложенисенче чарӑну паллисем тӗрӗс-и, тӗрӗс мар-и?**

1. *Пӑхатпӑр та аттепе – инҫех те мар пӗр ушкӑн кайӑк юр ҫинче пикенсех тем шӗкӗлчет.*
2. *Кил хушши алӑкне тӗртсе пӑхрӑмӑр – питӗрнӗ.*

а) иккӗшӗнче те тӗрӗс
ӑ) иккӗшӗнче те тӗрӗс мар
б) 1-мӗшӗнче – тӗрӗс, 2-мӗшӗнче – тӗрӗс мар
в) 1-мӗшӗнче – тӗрӗс мар, 2-мӗшӗнче - тӗрӗс

**40. Хутлӑ предложенири хутсӑр предложенисем пӗрпӗринпе мӗнле мелпе ҫыхӑннӑ?**

*Тӗкӗр ҫинче шӑвакан тулти тӗнче ҫине пӑхса ларнӑ май пуйӑс хӳри текех сулнӑка кайса пынӑ пек туйӑнать ӑна.*

а) союз   б) интонаци
ӑ) хыҫ сӑмах   в) вырӑнӗ-йӗрки

**41. Хутлӑ предложенири хутсӑр предложенисем пӗрпӗринпе мӗнле мелпе ҫыхӑннӑ?**

*Уйӑхӑн шупка ҫути ҫулӑҫсем хушшипе чӗнтӗрленсе ҫӗре сӑрхӑннине курсан тин кӑшт лӑпланнӑ пек пулчӗ вӑл.*

а) хыҫ сӑмах   б) вырӑнӗ-йӗрки
ӑ) аффикс   в) интонаци

**42. Хутлă предложенири хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе мĕнле мелпе çыхăннă?**

*Пӳлĕме кĕрсен вăл тикĕс мар кантăкран сăрхă-накан уйăх çути стена çине ӳкернĕ ылтăн çип сĕвемĕ пек йĕрсем çине пăхса тенкел çине ларчĕ.*

а) интонации б) вырăнĕ-йĕрки
ă) хыç сăмах в) аффикс

**43. Хутлă предложенири хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе мĕнле мелпе çыхăннă?**

*Ту хушшинче, хĕсĕннĕ шыв авăрĕсем çинче, вы-рăнăн-вырăнăн шур кăпăк арман чулĕ пек çаврăнса тăрать, тĕл-тĕл, хĕсĕк çĕрте, тĕрлĕ тĕслĕ чулсем пĕр-пĕринпе çапăнса юрлаççĕ.*

а) вырăнĕ-йĕрки б) интонаци
ă) хыç сăмах в) аффикс

**44. Хутлă предложенири хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе мĕнле мелпе çыхăннă?**

*Хулана çитсе кĕрес чух тин вăл шăнса кайнине туйрĕ те çийĕнче пиншак çуккине асăрхарĕ.*

а) союз б) хыç сăмах
ă) аффикс в) вырăнĕ-йĕрки

**45. Панă тĕслĕхсенче хутлă предложени тупăр.**

*1) Çынсене сăнать вăл, хаксемпе кăсăкланать.*

*2) Юсаса тăманнипе шоссе самаях япăхнă, унта та кунта асфальт татăкĕсем хăпăнса тухнă.*

*3) Петров хăй «Жигулине» «Москвича» хирĕç лартрĕ, сăнама пуçларĕ.*

*4) Вăрă лавккана кĕрсе кайрĕ, тепĕр вунă ми-нутранах пысăк çыхă йăтса тухрĕ, ăна машини ăшне пăрахрĕ.*

а) 1 ă) 3 б) 4 в) 2

**46. Панă тĕслĕхсенче хутлă предложени тупăр.**

*1) Унтан багажникран чылай пысăк сумка туртса кăларчĕ, çăкăр лавккине кĕрсе çухалчĕ.*

*2) Семен Ильич машинăн тĕкĕрĕ çине пăхрĕ те хыçра кăвак «Жигулие» асăрхарĕ.*

*3) Кăкăр умĕнчи пĕчĕк кĕсьерен водитель правине кăларчĕ, унпа пĕрле виçĕ е пилĕк тенкĕлĕх укçасем сиксе тухрĕç.*

*4) Пĕр лавккара вунă çăкăр туянчĕ вăл, унтан теприн патне кăлтăртатрĕ.*

а) 1 ă) 3 б) 4 в) 2

**47. Панă тĕслĕхсенче хутлă предложени тупăр.**

*1) Пĕрре тревогăпа çĕклерĕç те, ыйхă тĕлĕшпе сан çинех сикнĕччĕ эпĕ.*

*2) Тăвайне тухса каякан урамра, пилĕк хутлă пысăк çуртра, виççĕмĕш хутра пурăнать иккен.*

*3) Кительне хывса çакрĕ майор, кĕпе вĕççĕн тăрса юлчĕ.*

*4) Пÿртсем, хуралтăсем, хапха çине ÿкнĕ сывлăм тахçанах типнĕ.*

а) 1 ă) 3 б) 4 в) 2

**48. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Вилсе кайиччен чĕлхи те пулин уçăлинччĕ тесе, тăванĕсем аякри юмăççем патне те çÿрерĕç, чÿк хывнă чухне те мĕн кирлине хĕрхенсе тăмарĕç, мунча пăлтăрĕнче шăпăр та çыхатчĕç, пÿлĕхе те тархасларĕç – усси пулмарĕ.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени

Ч-42687
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

в) пăхăнуллă хутлă предложени

**49. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Вăл сулахай урипе аллине кăна хускаткалать, çăварĕнче пĕр тĕпренчĕк пулмасан та, хушăран темĕн чăмлать, типсе куштăрканă тутине çулакалать, хĕсĕк куçне мăч-мăч уçса-хупса илсе хăй умĕнче кам-кам тăнине пĕлме тăрăшнă пек пăххалать.*

а) сыпăнуллă хутлă предложени
ă) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

**50. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Элентей пĕр чăрманса тăмасăр ашшĕ кĕсйинчен сăтăрăлса пĕтнĕ сарă енчĕк туртса кăларчĕ, пур пек укçине шутласа, енчĕкне тĕпелти сĕтел çине çиллессĕн çĕклесе çапрĕ: çыхман енчĕкри укçа пăхăр аврлă çĕçĕ тĕлне лексе саланса кайрĕ.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

**51. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Çамаккан аслашшĕ-и, мăн аслашшĕ-и, хăй вăхăтĕнче таврари çулсен çĕрлехи тискер хуралçи пулнă пулать, вăл усал вăрă-хураха çывăх курнă имĕш, пуян сутăçсене чееленсе юранă, тет, çавăнтан вара хăй те пит пуйса кайнă пулать.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

52. Хутлă предложени тĕсне калăр.

*Темле йывăç та ӳсет çĕр çинче, пурин валли те вырăн çитет темелле: хăшĕ пахчара саркаланса савăнать, хăшĕ çурт умĕнче юри тăратнă хурал пек ларать, ял урлă каçакан тарăн çырмара та йăмрасем таçта çӳле кармашаççĕ.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) пăхăнуллă хутлă предложени
в) союзсăр хутлă предложени

53. Хутлă предложени тĕсне калăр.

*Пасара каймалла тесен, Тимрука урăх нимĕн те кирлĕ мар, уншăн пасар курса çӳресси темĕне тăрать.*

а) союзсăр хутлă предложени
ă) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
б) сыпăнуллă хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

54. Хутлă предложени тĕсне калăр.

*Кĕтӳ кĕтме кĕрĕшес тесе, ял çыннинчен нумайăш тава кĕнĕ, ятлаçнă, Тухтарăн тавлашса тăма хăвачĕ çитмен, унăн хутне кĕрекенни ялта сахал пулнă,- пурăннă çапла вăл мĕскĕнле, тăлăх шăпине тӳссе.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

55. Хутлă предложени тĕсне калăр.

*Селиме хăй куç умĕнче мĕн пуррипе çырлахмасть, унăн пĕлес-чухлас тенĕ туртăмĕ пысăк,*

*ĕмĕр тăршшĕне те вăл паянхи пекех çĕкленнĕ вăй-хăватпа пурăнасса кĕтет.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) союзсăр хутлă предложени
б) сыпăнуллă хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

**56. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Çав вăхăтра ăна темле сасă илтĕннĕн туйăнчĕ; вăл пуçне çĕклерĕ те сасартăк яшт тŷрленсе тăчĕ: икĕ кашкăр ун умне çитсе чарăннă та пăхса тă-раççĕ.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

**57. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Селиме мухтанчăксемпе вĕçкĕнсене кăмăлламасть, ун пеккисем çынна çеç мар, хăйсене те хисеплеме пĕлмен пек туйăнать ăна.*

а) союзсăр хутлă предложени
ă) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
б) сыпăнуллă хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

**58. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Анчах тырра пŷлмене пухса иличчен тем курасси те пулĕ, ăна пĕр турă кăна пĕлет.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

**59. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Ялта вара, кирек мĕн пулсан та, пĕр çын алли хăтланать çакна тесе сăмахлама тытăнаççĕ.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

**60. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Лашисем пĕринчен тепри лайăх, çăмарта пек; вырăнта тăра пĕлмен ăйăрĕнчен Утларăш мар, таврари халăх тĕлĕнсе тăрать, акатуйсенче кашни ут ямассерен çав ăйăр чи малти вырăна тухать.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

**61. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Авă вăрăмланнă чĕрне айĕнче çарăк акмалăх тăпра пуçтарăннă, пӳрни хушшине кирĕк çине кирĕк пĕрĕне-пĕрĕне хутланнă, вĕри шывпа та кĕлпе çумасăр сĕвĕнсе ӳкмеççĕ ĕнтĕ вĕсем.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) пăхăнуллă хутлă предложени
в) союзсăр хутлă предложени

**62. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Çак аласемпе сăра курки тытасса асне илсен, Шерккейĕн çан-çурăмĕ сӳлетсе каять, çамки çине сивĕ тар персе тухать.*

а) союзсăр хутлă предложени
ă) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
б) сыпăнуллă хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

**63. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Çав виçĕ куна ял халăхĕ урамра ирттерет, хĕвел анса тĕттĕм пулсан тин çынсем пÿрте кĕреççĕ, алăк урлă каçайман ваттисемпе сăпка ачисем çеç пÿртре юлма пултараççĕ.*

а) сыпăнуллă хутлă предложени
ă) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

**64. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Ваттисем Çинçене хисеплеме хушаççĕ, хисеплемесен, тырра шăрăх ĕнтет имĕш, ытти кĕтмен инкек-синкек те çулăхма пултарать.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) пăхăнуллă хутлă предложени
в) союзсăр хутлă предложени

**65. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Пурте шап-шурă тумланнă, çара пуçăн, нумайăшĕ витре çĕкленĕ, уяв ирттерме суйласа хунă урам пуçĕ тухасса кĕтеççĕ.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

66. Хутлă предложени тĕсне калăр.

*Унăн хĕрлĕ мăйăхĕ ик еннелле тăпăлса тăрать,- варринче çук, виç-тăват пĕрчĕллĕ сухалĕ хăрăхса пĕтереймен турашăл пек, çил вĕрнĕ май пĕрчĕн-пĕрчĕн вĕлкешет.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) пăхăнуллă хутлă предложени
в) союзсăр хутлă предложени

67. Хутлă предложени тĕсне калăр.

*Мĕн авалтанпах чăваш çамрăкĕ вăййа юратать, çурхи ĕçсем пĕтсен, пушаннă вăхăт килет, ытти темваскатаканни пуçланман-ха, каçсем-çĕрсем ăшă тăраççĕ.*

а) сыпăнуллă хутлă предложени
ă) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

68. Хутлă предложени тĕсне калăр.

*Хĕрсемпе каччăсем касси-урамĕпе карталанса ялти чи илемлĕ вырăна пухăнаççĕ те, вĕсен мухтавлă сăвви-юрри, ташши-такмакĕ мĕн çур çĕр иртиччен ян каять.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

69. Хутлă предложени тĕсне калăр.

*Акă çамрăксен пĕр кăшăлĕ пĕр еннелле çаврăнать, тепри ăна хирĕç, виççĕмĕшĕ каллех*

*пĕрремĕш пек çавранса иртет те, ушкăн вара юхан шыв хумĕ çинче хĕвел ташланăн туйăнать.*

а) сыпăнуллă хутлă предложени
ă) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

70. **Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Ял халăхĕ ырă суннине Имет хăй те лайăх туять, вăл тем пек халăх кăмăлне çырлахтарасшăн.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

71. **Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Лутра Михаля, хăйне лайăххрах курăнтăр тесе, пĕр çĕмрĕк ещĕк çине хăпарса тăрасшăн пулчĕ, ещĕк йăтăнса анчĕ те, Михаля персе ўкрĕ.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) союзсăр хутлă предложени
б) сыпăнуллă хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

72. **Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Çу хушшинче ыраш пиçсе çитиччен çанталăк питех хĕртмерĕ, çул тăрăх тусан та ытла тусмарĕ, çумăрсем вăхăтра çăва-çăва иртрĕç.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

73. **Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Ĕнтĕ вăл пĕлĕт епле шавласа килнинченех пăр çăвасса сисрĕ; часах пăр ватма та тытăнчĕ.*

а) сыпăнуллă хутлă предложени
ă) союзсăр хутлă предложени
б) пăхăнуллă хутлă предложени
в) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени

74. **Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Çын хуйхине çын пĕлмест, ăш темле çулăмпа çунать пулин те, тĕтĕм тухни курăнмасть.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

75. **Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Тăррисенче çеç, çу кунĕнче хĕвел хĕртесрен, хĕлле сивĕ тивесрен сыхланнă пек, пуçĕсене чăвашла çавра çĕлĕк лартса янăн курăнаççĕ.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

76. **Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Шаларах кайнăçемĕн чăтлăх пуçланать, чăрăшпа яхта хушшинче чечен хурăн курăнать, вăл шурă шупăрне ури тупанне çити пĕрсе лартнă сарпике пек, лăпкă çил унăн ешĕл çӳçне васкамасăр турать.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени

б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложении

**77. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Касма меллех мар пулсан та, шăхăрса янăрать пăчкă, сухăрлă кĕрпе енчен енне вăркăшса сирпĕнет.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

**78. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Çăварни иртсен виççĕмĕш каç, ял халăхĕ урамра çӳреме чарăнсан, Кантюкăн юман юпаллă вырăсла хапхи чĕриклетрĕ те, хăй тĕллĕн тенĕ пек, яриех уçăлчĕ.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

**79. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Кил хуçи мăшăрĕ, хăй умĕнче кам тăнине палларĕ пулсан та, палламаҫ пек пăхса, куçне хупа-хупа уçрĕ, унтан аяккинелле пăрăнчĕ, куççулĕ пĕçертсе шăпăртатса анчĕ.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

**80. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Çав ачасенчен çын пуличчен çурри ытла вилсе пĕтет, хăш-пĕрисем вара пурăнкалам пек хăтланаççĕ.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) союзсăр хутлă предложени
в) пăхăнуллă хутлă предложени

**81. Хутлă предложени тĕсне калăр.**

*Йышлăн пуçтарăннăччĕ халăх, пĕтĕм ял хăпса килнĕччĕ, Кантюк таврашĕнчен кăна никам та пулмарĕ.*

а) кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени
ă) сыпăнуллă хутлă предложени
б) пăхăнуллă хутлă предложени
в) союзсăр хутлă предложени

**82. Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Çил вĕрсе килет те, йывăç тăррисем хумханнă май вĕсем хушшине карăннă ахаль чух çивĕч куçа та курăнман хурçă хĕлĕх пек эрешмен çипписем мĕлке çинчен самантлăха тухса йăлтăртатаççĕ, вара каллех пытанаççĕ.*




**83. Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Çил çинчи çÿçе турачĕсем пек шĕвеккĕн вĕлтĕртетсе шăвакан пĕлĕтсем хушшинчен çурри таран касăк уйăх тухса имшеррĕн пăхма тытăнсан, тавралăх çуталса кайнăн туйăнчĕ, малта вăрман курăнчĕ.*



**84.** Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.

*Хăвалăх çыннипе вырăс мучи тырăпа тăвар тата ытти япала хакĕ ÿссе пыни çинчен калаçса ларнă чух Атăл хĕрринчи каçхи сывлăш чылаях сивĕнсе çитрĕ, вăрăм тунасем те пĕренесем çинче ларакансене самаях вĕтелеме тытăнчĕç.*



**85.** Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.

*Чи хыçалта тăракан Иркка Тарук аппа каласа пĕтеричченех алăка уçрĕ те вĕлт çеç турĕ, ун хыççăн пурте пĕрне-пĕри тĕрткелесе тухрĕç.*



**86.** Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.

*Урараи такам тапнине сиссен вăл шартах сиксе вăранчĕ те хăйĕн умĕнче икĕ фашист тăнине курах кайрĕ.*



**87.** Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.

*Пуян чухăна ахаль пулăшманнине тĕшмĕртеççĕ вĕсем: вăл хушнине вăхăтра тăваççĕ, вăл ыйтнине хирĕçлемеççĕ.*



**88.** **Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Çак сăмахсене Серафима Артемьевна кăштах паттăрлатса каларĕ пулин те, ун сассинче ĕмĕр сирĕлми хурлăх пурри сисĕнчĕ.*



**89.** **Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Мĕн пулнине те, Асанкасси епле майпа çунса кайнине те, ял халăхĕ ăçта кайса кĕнине те пĕлеймерĕ вăл.*



**90.** **Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Хăй кăмăллакан çыннăн ĕçĕсем ăнса пыни çамрăк Ульянова питĕ савăнтарчĕ.*



**91.** **Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Пĕве лăплансан, чĕпĕсем те хăйсене йăпанмалли тупрĕç: пĕве çийĕн ӳпресем вĕçме тытăнчĕç.*





**92.** **Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Ирkка сарай çулĕпе пахчаран урама тухнă çĕре ялта хапхасем уçăлса хупăна пуçларĕç: лашаллисем пурте лаша кÿлсе, лашасăррисем тăванĕсемпе е кÿршисемпе пĕрле Варак çырми хĕррине тулă вырма туха-туха каяççĕ.*



**93.** **Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Самана хушши йывăр пулнă пулсан та, мăн çынсем хуйхă-суйха пусăхнă пулсан та хĕр ача чĕрине çут çанталăк илемĕ те кăтăклянă, ăнлансах çитейме çук ăрăмлă япаласем те пулнă çĕр çинче уншăн, хÿхĕм ĕмĕтсем те тин çеç сăмсаланнă.*



**94.** **Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Вĕсем тутăр вĕçтерсе салтак чупнă чух çынсем куçĕсене шăлса хапха умĕнчен пăхса тăчĕç пулсан – Укахви пĕрре çеç кантăк витĕр урай варринче тăрса пăхса кĕчĕ.*



**95. Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Петя кил карти патне çывхарсанах хăйсен çуллахи лаçĕнчен шĕвĕ тĕтĕм йăсăрланса тухнине, урама апат шăрши сарăлнине сисрĕ.*



**96. Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Малтан вăл тӳрех сунар станцине таврăнасшăнччĕ, анчах çак вăхăтра кăнтăр енчен вĕрекен çил темиçе пăшал харăс персе кăларнă сасса илсе килчĕ.*



**97. Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Çырăвне Микулай çырман пулсан та, кашни сас палли ăна аса илтерет, мĕншĕн тесен вулама-çырма ăна Микулай вĕрентнĕ-çке.*



**98. Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Ку ача ăна йывăр шухăша ярать, ашшĕ вăрçăран аманса килсе килте асапланса вилнине, вĕсем амăшĕпе татăлса макăрнине аса илтерет.*




**99. Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Николай хăйне йĕри-тавра тĕкме пек çын ушкăнĕ çавăрса илнине, çав çын унки ăна тулалла сĕтĕрсе пынине туйса илчĕ.*




**100. Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Пăлханулла та савăнăçлă кунсем ирте пуçласан пурнăç хăй йĕркипе тикĕссĕн шума тапрансан Максим Иванович тăван ялне тимлесе сăнама тапратрĕ.*




**101. Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Егор Иваныч хăваслăран-ши е хĕвел ялтранăран çынсен сăнĕ-пичĕ çутă, ырă кăмăллă.*




**102. Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Хĕр тепĕр еннелле çаврăнсанах Павел алăк патнелле утать, алăк хăлăпне тытсан, хыçалтан хĕр чупнине асăрхасан, крыльца çинченех пылчăк çине пăхкаласа, пит-куçне çилĕллĕн перкелесе аллипе пӳртелле кăтартать, чышкипе юнать.*



**103. Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

*Каллех ял кĕтĕвĕ, уя тухма çеç ĕлкĕрнĕскер, шăнса хутланнă сысна çурисем çухăрнипе, амăшĕсене çухатнă путексем, путекĕсене çухатнă амăшĕсем макăрнипе янăраса яла кĕрсе каять.*



**104. Хутлă предложенин тĕрĕс схемине тупăр.**

Эпĕ хĕрачасем пурте хваттере вырнаçса пĕтнине пĕлтерсен, мана вăл хăй хыççăн пыма чĕнчĕ.



## 2.3. ПУНКТУАЦИ

**1. Союзсăр хутлă предложенири хутсăр предложенисем ĕçсем пĕр-пĕрин хыççăн хăвăрт е кĕтмен çĕртен пулнине сăнланă чух вĕсем хушшине мĕнле чарăну палли лартаççĕ?**

а) запятой б) тире

ă) икĕ точка в) тире тата запятой

**2. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Кил хушши шăлакан хĕр вара, пĕр вырăнта хытса тăнăскер, чăматанне ывăннă пек çапкалантарса кайнă çĕнĕ турист хыççăн питĕ сăнаса пăхса юлчĕ.*

а) Кўртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

ă) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

б) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

в) Союзсăр хутлă предложени пайĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

**3. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Вăрăм çўç пек усăнакан туратлă çирĕксем пуçĕсене уснă, Çирĕклĕх шывне хупласах хунă.*

а) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене запятойпа уйăрмалла.

ă) Союзсăр хутлă предложени пайĕсем пĕр еврĕлĕ ĕçсене е пулăмсене сăнланă чух вĕсене запятойпа уйăрмалла.

б) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрмалла.

в) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăрмалла.

**4. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Ҫапă купи айĕнче вăрман шăшийĕ чупкалать, ахăртнех, хăйĕн йăвине йĕкел пухать пулĕ.*

а) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

ă) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

б) Союзсăр ҫыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятойпа уйăраççĕ.

в) Хутлă предложенин союзсăр ҫыхăнакан пайĕсем хушшине запятой лартаççĕ.

**5. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Тӳпелешӳ пуҫланса кайрĕ те, Лисук инкĕшĕсемпе пĕрле кил хушшине пырса ларчĕ.*

а) Пĕр йышши членсене запятой лартса уйăраççĕ.

ă) Союзсăр хутлă предложени пайĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

б) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

в) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшине запятой лартаççĕ.

**6. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Ҫуркунне, ҫĕмĕртсем ҫеҫкене ларсан, тĕл пулнăччĕ вĕсем.*

а) Союзсăр ҫыхăннă пĕр йышши членсене пĕрпĕринчен запятой лартса уйăраççĕ.

ă) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

б) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

в) Сăмах тĕп предложенин тытăмне кĕнине кăтартма ăна запятой лартса уйăраççĕ.

**7. Предложенири чарӑну паллине мӗнле пунктуаци правилине пӑхӑнса лартнӑ?**

*Ҫулла, ачасем ҫум ҫумлама тухсан пахча янӑраса ҫеҫ тӑрать.*

а) Союзсӑр ҫыхӑннӑ пӗр йышши членсене пӗр-пӗринчен запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

ӑ) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

б) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух предложенири ытти сӑмахсенчен запятойпа уйӑраҫҫӗ.

в) Сӑмах тӗп предложенин тытӑмне кӗнине кӑтартма ӑна запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

**8. Предложенири чарӑну паллине мӗнле пунктуаци правилине пӑхӑнса лартнӑ?**

*Ачаш юмансене, ахӑртнех, ҫеҫен хирти ҫум курӑкӗсем чӑрмантараҫҫӗ пулӗ.*

а) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

ӑ) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух предложенири ытти сӑмахсенчен запятойпа уйӑраҫҫӗ.

б) Союзсӑр ҫыхӑннӑ пӗр йышши членсене е вӗсен ушкӑнӗсене запятойпа уйӑраҫҫӗ.

в) Хутлӑ предложенин союзсӑр ҫыхӑнакан пайӗсем хушшине запятой лартаҫҫӗ.

**9. Предложенири чарӑну паллине мӗнле пунктуаци правилине пӑхӑнса лартнӑ?**

*Больницине вара хулари пекех капмар туса лартнӑ та, йӑли-йӗрки те унтинчен нимпе те уйрӑлса тӑмасть пулмалла.*

а) Союзсӑр хутлӑ предложени пайӗсене запятойпа уйӑрмалла.

ӑ) Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсене запятойпа уйӑрмалла.

б) Пӗр йышши членсем пӗр вӑхӑтри ӗҫсене е пулӑмсене сӑнланӑ чух вӗсене запятойпа уйӑрмалла.

в) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăрмалла.

**10. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Урамра, халăх пухăнса тăнă вырăнта, сасартăк хыттăн шавлама пуçларĕç.*

а) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене пĕрпĕринчен запятой лартса уйăраççĕ.

ă) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

б) Кўртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

в) Сăмах тĕп предложенин тытăмне кĕнине кăтартма ăна запятой лартса уйăраççĕ.

**11. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Ěнер çеç çил аслатиллĕ çумăр пĕлĕчĕсене пăтратнă, кайăк кĕтĕвĕсене хăваланă, чечекри садсен шăршине çурхи шывсем çине иле-иле сапнă.*

а) Хутлă предложенин союзсăр çыхăнакан пайĕсем хисеплев интонацийĕпе пĕрлешнĕ чухне вĕсем хушшине запятой лартмалла.

ă) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăрмалла.

б) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрмалла.

в) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятойпа уйăрмалла.

**12. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Хăвăл йĕри-таврашĕнчи йывăç хуппи тăсăлса çĕкленнĕ пек пулчĕ, урăхла каласан, хăвăл тутине тăсрĕ.*

а) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

ă) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

б) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятойпа уйăраççĕ.

в) Хутлă предложенин союзсăр çыхăнакан пайĕсем хушшине запятой лартаççĕ.

**13. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Тепĕр енче пĕр кĕтӳ пĕлĕт, шултра сурăхсем пек, ту тăрринелле чупать те икĕ еннелле уйрăлса каять.*

а) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

ă) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

б) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

в) Союзсăр хутлă предложени пайĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

**14. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Унта туратсемпе хулăсем пĕр-пĕринпе çыхланса ларнă та, чупса пырса тăрăнсан та шăтарса тухаймастăн.*

а) Союзсăр хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрмалла.

ă) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрмалла.

б) Пĕр йышши членсем пĕр вăхăтри ĕçсене е пулăмсене сăнланă чух вĕсене запятойпа уйăрмалла.

в) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăрмалла.

**15. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Тырă вырнă чух, аслисем канма ларсан эпир ачасемпе çырма хĕррине чупса кайса шыва кĕреттĕмĕр.*

а) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене пĕрпĕринчен запятой лартса уйăраççĕ.

ă) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

б) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

в) Сăмах е сăмахсен пĕрлешĕвĕ тĕп предложенин тытăмне кĕнине кăтартма ăна запятой лартса уйăраççĕ.

**16. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Эльвира çинçешке пӳрнисемпе куçне шăлса илет, пичĕ çинче вĕлтĕртетекен çӳç пайăркине хăлхи хушшине хĕстерет.*

а) Хутлă предложенин союзсăр çыхăнакан пайĕсем хисеплев интонацийĕпе пĕрлешнĕ чухне вĕсем хушшине запятой лартмалла.

ă) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятойпа уйăрмалла.

б) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрмалла.

в) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăрмалла.

**17. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Хирĕç пăхса ларакан каччăн куçĕ, чăн та, куллен тĕл пулакан йышши мар.*

а) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух запятойпа уйăраççĕ.

ă) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

б) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятойпа уйăраççĕ.

в) Хутлă предложенин союзсăр çыхăнакан пайĕсем хушшине запятой лартаççĕ.

**18. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Пĕлтĕр Зинови, Хусанти медицина институтĕнче вĕренекенскер, практикăра пĕр чăваш ялĕнчи больницăра пулнăччĕ.*

а) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

ă) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

б) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

в) Союзсăр хутлă предложени пайĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

**19. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Таçтан тури касри йăмрасем айĕнчен юрă вĕççе килчĕ те, анат касри улаха чун кĕчĕ.*

а) Пĕр йышши членсене запятой лартса уйăраççĕ.

ă) Союзсăр хутлă предложени пайĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

б) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

в) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшине запятой лартаççĕ.

**20. Предложенири икĕ точкăна мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Шурăмпуç кайăкĕ чăрăш тăрринче юрă юрлать: вăл пĕр куçĕпе каçхи шурăмпуçа пăхса ăсатать, тепринпе ирхи шурăмпуçа кĕтсе илет.*

а) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

ă) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

б) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

в) Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

**21. Предложенири икĕ точкăна мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Салампи хăйĕн телейне, савăнăçне çынсенчен пытараймарĕ: унăн тулли кăвак куçĕсенче, пушшех илемленсе, çуталса кайнă сăнĕнче пысăк, хĕрӳллĕ туйăм ялкăшса илчĕ.*

а) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

ă) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

б) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

в) Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

**22. Предложенири икĕ точкăна мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Хĕвелпе нӳрĕк чунсăр чулра та пурнăç вăратнă: ăçта килчĕ унта кĕç-вĕç ӳкесле çырантан çакланса лăска пуçĕсене чикнĕ тĕмĕсем усăнаççĕ.*

а) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

ă) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

б) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

в Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

**23. Предложенири икĕ точкăна мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*Сăрталла кăштах хăпарсассăн эпĕ аялалла тепĕр хут çаврăнса пăхрăм: умра, сĕвек тӳремĕнче, хитре-хитре пысăк кавир сарăлса выртать.*

а) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

ă) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

б) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

в) Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

## 2. 4. ÇЫХĂНУЛЛĂ ПУПЛЕВЕ АТАЛАНТАРАССИ

### 2.4.1. Текст. Унăн пайĕсем

1. Панă предложенисенчен çыхăнуллă текст йĕркелемелли тĕрĕс хурава тупăр.

*(1) Вăл час çĕрмест, çурт-йĕр таврашĕнче çĕр-çĕр çул хушши çирĕппĕн тăрать.*
*(2) Пирĕн вăрманти йывăççене урăх çĕршывсене те ярса тăнă.*
*(3) Чăваш юманĕ пиçĕ те çирĕп.*
*(4) Мускавпа Питĕрти керменсене ĕлĕкхи вăхăтра та час-часах чăваш юманĕсенчен тунă япаласем илемлетнĕ.*
*(5) Унтан кермен çуртсен урайĕсене сармалли паркет, хаклă йышши сĕтел-пукан тата урăх япаласем тăваççĕ. (Ç. Элкер.)*

а) 1, 3, 4, 2, 5 б) 3, 2, 4, 1, 5
ă) 3, 1, 5, 4, 2 в) 1, 2, 5, 4, 3

2. Панă предложенисенчен çыхăнуллă текст йĕркелемелли тĕрĕс хурава тупăр.

*(1) Эпир Кольăпа купа тăватпăр.*
*(2) Ешĕл утта йĕпетес мар тесе эпир пĕтĕм вăйран ĕçлеме тытăнтăмăр.*
*(3) Пĕр кунхине çапла кунĕпех утă пухрăмăр.*
*(4) Ĕç вĕресе çеç тăрать.*
*(5) Каç енне анăçра хура пĕлĕтсем курăнчĕç.*
*(6) Хĕрачасем кĕреплесемпе тураççĕ, арçын ачасем сенĕксемпе йăтаççĕ. (П. Егоров.)*

а) 3, 5, 2, 6, 1, 4 б) 3, 6, 2, 4, 1, 5
ă) 1, 3, 4, 2, 6, 5 в) 1, 2, 5, 6, 4, 3

3. Панă предложенисенчен çыхăнуллă текст йĕркелемелли тĕрĕс хурава тупăр.

*(1) Çăмартине те таçта тăвать вăл.*

*(2) Кайран кĕр енне виҫ эрне таҫта ҫĕтсе пурăнчĕ те кĕтмен ҫĕртен пĕр пуслăх чĕпĕ ертсе таврăнчĕ.*

*(3) Хреҫҫи инкен пĕр хура чăх пур.*

*(4) Пĕлтĕр те килте пĕр ҫăмарта туман.*

*(5) Пĕрре те килте тăра пĕлмест, кунĕпех урамра тек сăхса ҫӳрет.*

*(6) Кĕрхи чĕпĕсенчен пĕри те пурăнаймарĕ, пурте вилсе пĕтрĕҫ.*

*(7) Эх, тарăхрĕ-ҫке ун чух Хреҫҫи инке.* (Ю. Скворцов.)

а) 1, 3, 4, 6, 2, 7, 5 б) 3, 5, 1, 4, 2, 6, 7
ă) 3, 1, 7, 5, 6, 4, 2 в) 1, 2, 6, 7, 5, 4, 3

**4. Панă предложенисенчен икĕ ҫыхăнуллă текст йĕркелемелли тĕрĕс хурава тупăр.**

*(1) Лапка-лапка юр ҫунă хыҫҫăн ачасем урама тухрĕҫ те каҫса кайсах выляма тытăнчĕҫ.*

*(2) Акă кăткă вăранать те йăваран аяккалла кайма тухать.*

*(3) Питĕ пысăк юр купи турĕҫ.*

*(4) Унта пĕчĕккисем те тăрăшса ĕҫлерĕҫ.*

*(5) Кашни кăткăн хăйĕн сукмакĕ пур.*

*(6) Ҫухалса каясран вăл хăйĕн мăйăхĕпе (уссипе) ҫула тĕрĕслесе пырать.*

*(7) Вĕсем пысăккисене юр чăмаккисем тăва-тăва пырса пачĕҫ.* (А. Лазарева, В. Козлов.)

а) 1, 3, 4, 6; 2, 7, 5 б) 1, 3, 4, 7; 2, 5, 6
ă) 3, 1, 7; 5, 6, 4, 2 в) 1, 2, 6, 7; 5, 4, 3

**5. Панă предложенисенчен икĕ ҫыхăнуллă текст йĕркелемелли тĕрĕс хурава тупăр.**

*(1) Анчах шыв хăпарнăҫем хăпарнă.*

*(2) Эпĕ хускалмасăр пăхса ларатăп.*

*(3) Утрав пĕчĕкленсех пынă.*

*(4) Вĕсем мана асăрхарĕç пулин те вĕçсе тарма шутламарĕç, кăшт кăна аяккарах пăрăнчĕç.*

*(5) Сасартăк çывăхрах пăшал сасси кĕрĕслетрĕ.*

*(6) Мулкач хăранипе утравăн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне чупкаланă.*

*(7) Кайăк кăвакал чĕпписем кар-р! кăна çĕкленсе вĕçсе кайрĕç.* (*В. Бианки, Г. Харлампьев.*)

а) 1, 3, 6; 2, 4, 7, 5 б) 1, 3, 4, 7; 2, 5, 6
ă) 3, 1, 7; 5, 6, 4, 2 в) 1, 2, 6, 7; 5, 4, 3

**6. Панă предложенисенчен икĕ çыхăнуллă текст йĕркелемелли тĕрĕс хурава тупăр..**

*(1) Пĕррехинче эпĕ вăрман хĕрринчи хӳтĕ кĕтесре ларатгăм.*

*(2) Вăрмансем, улăх-çарансем, сад пахчисем ем-ешĕл-ха.*

*(3) Кĕр çитни ниçта та курăнмасть.*

*(4) Пăхатăп – кăткă тĕми çинче пилеш кайăкĕ сиккелесе çӳрет.*

*(5) Урипе ун тăррине салатать.*

*(6) Август уйăхĕн вĕçĕнче вара таврара такам асăрхануллăн утса çӳрени палăрчĕ.*

*(7) Сад пахчисенче те, вăрмансенче те вăл хăйĕн йĕрĕсене хăварма тытăнчĕ.* (*В. Тимаков, В. Песков.*)

а) 1, 3, 4, 6; 2, 7, 5 б) 1, 4, 5, 7; 2, 3, 6
ă) 1, 4, 5; 2, 3, 6, 7 в) 1, 2, 6, 7; 5, 4, 3

## 2.4.2. Текст теми, тĕп шухăшĕ

**1. Текстăн тĕп шухăшне палăртакан предложенисене тупăр.**

*(1)Тĕревпе тĕрек*

*(2)Кӳршĕ ялта авал пĕр ват çын хăйĕн икĕ ывăлне нӳхреп тӳрлетме хушнă. (3)Нӳхрепне хăй çамрăк чухнех тунă пулнă. (4)«Эсир, ачасем, урата-*

*сене улăштариччен, нӳхреп ишĕлсе анасран, вăхăтлăха тĕревсем лартăр». (5)Ывăлĕсем: «Юрĕ», - тенĕ.*

*(6)Анчах ашшĕ нӳхрепе анаймасса пĕлсе вĕсем çапла юри çеç каланă: ĕçе васкаса пĕтерес тесе тĕревсем лартман. (7)Хăйсем ашшĕнчен ахăлтатса çеç кулнă.*

*(8)Ĕç вĕçне çитесси нумаях та юлман – нӳхреп лаштăр! ишĕлсе аннă...*

*(9)Ĕçри йĕркесĕрлĕх инкексĕр пулмасть иккен. (10)Çамрăксен çăмăлттайлăхĕ – ваттисене йывăрлăх. (11)Ваттисем калани – тĕрек те, тĕрев те. (12)Вĕрентнине итлемесен пархатар çук.*

а) 1, 9 б) 1, 11
ă) 1, 10 в) 11, 12

**2. Текстăн тĕп шухăшне палăртакан предложение тупăр.**

*(1)Юпах тиха*

*(2)Юпах тиха кăвак çутăллах тăнă тет те пуçне каçăртса урампа пырать тет.*

*(3)«Ăçта каян?» - тесе ыйтрĕç тет унран.*

*(4)«Сухана!» - терĕ тет юпах тиха мăнаçлăн пуçне тата çӳлерех каçăртса.*

*(5)Хĕвел ансан юпах тиха ĕçрен каялла таврăнать тет. (6)Сĕлкĕшленнĕ тет хăй, пуçне уснă тет, сĕлтех кайнă тет, урисене аран-аран сĕтĕркелет тет. (7)Ку ытлашшипех йăшнине асăрхакансем чăтса тăраймасăр унтан ыйтрĕç тет:*

*«Ăçтан таврăнатăн?»*

*(8)«Сухаранччĕ те-ха...» - терĕ тет юпах тиха хĕвел çинче хытса куштăрканă тутисене аран-аран хускаткаласа.*

*(9)Ĕçĕн алли хытă çав. (10)Çакна ĕлĕк-авал пит лайăх палăртса хăварнă ват асаттесем.*

а) 1 ă) 9 б) 10 в) 8

**3. Текстăн тĕп шухăшне палăртакан предложение тупăр.**

*(1)Пахчаçăпа ывăлĕсем*

*(2)Ĕлĕк-авал пĕр ватă пахчаçă ывăлĕсемпе пурăннă. (3)Пурнăçĕ çăмăл мар пулсан та, ашшĕ пур чух пурăнкаланă-ха ачисем. (4)Ашшĕсĕр тăрса юлсан вĕсем пуçĕсене кăна мар, аллисене те усасран хăранă старик. (5)Ачисене пахча ĕçне пĕчĕкренех вĕрентменшĕн пит ÿкĕннĕ.*

*(6)Пĕррехинче, çав тери хытă аптрасан, пахчаçă ывăлĕсене чĕннĕ те каланă:*

*- Ачамсем, эпĕ вилсен аçăр пехиллесе хăварнă япалана улма пахчинче пурте пĕрле тăрăшса шырăр. Пĕрле шырасан çеç ăна тупма пултарăр.*

*(7)Ачисем ашшĕ пахчана ылтăн-кĕмĕл пытарса хăварнă пулĕ тесе шутланă. (8) Ашшĕ вилсен вĕсем пĕтĕм пахчине чакаласа пĕтернĕ. (9)Чавса кăпкалатман вырăн хăварман. (10)Вара çĕрĕ çемçелнĕ те, пахча çимĕç ĕлĕкхинчен нумай тухăçлăрах пула пуçланă. (11)Пурнăçĕ те ерипен юсанса пынă.*

*(12)Çапла вара, çичĕ ывăл ашшĕ пехиллесе хăварнă мула тăрăшса шырани харама кайман. (13)Вĕсем ашшĕнчен юлнă пуянлăха тупнă-тупнах. (14)Ку пуянлăх – пĕрлĕхлĕ вăй, мул вара – тăрăшса ĕçлени.*

а) 1 ă) 6 б) 13 в) 14

### 2.4.3. Текст планĕ

**1. Пăтраштарнă пайсенчен план тăрăх çыхăнуллă текст йĕркелĕр. Сĕннĕ плансенчен хăшĕ тĕрĕс пулнине палăртăр.**

(1) Кăвакарчăнĕ çамрăкчĕ. Вăл хăй тĕллĕн вĕçме те хальтерех вĕреннĕ пуль, анчах унăн хăрах çуначĕ аманнăччĕ. Эпĕ ăна хĕрхентĕм, пăхма тытăнтăм. Аманнă çунатне эмел сĕрсе тутăрпа çыхрăм. Хăйне ир те, каç та тырă сапса параттăм, шыв ĕçтереттĕм.

(2) Çу кунĕ çитнĕ çĕрелле кăвакарчăн пысăкланчĕ, тĕкĕ тикĕсленчĕ, шурăрах курăнакан пулчĕ.

Эпĕ ăна уçă кантăкран кăлараттăм та, кăштах вĕçсе çӳресен хăех таврăнатчĕ.

(3) Часах кăвакарчăн вăй иле пуçларĕ, алла иленчĕ, сывалчĕ. Çыхнă тутăра салтсан та унăн çуначĕ усăнса тăми пулчĕ. Хăй çапах вĕçме пултараймастчĕ-ха.

(4) Пĕррехинче эпĕ хамăр пахчара шурă кăвакарчăн тупрăм. Вăл мана ытла мĕскĕннĕн курăнчĕ: хăрăх çунатне уснă, курăк ăшĕнче хурлăхлăн лăпчăнса ларать. Мана курсанах çĕкленчĕ те тарасшăн пулчĕ. Эпĕ ăна пӳрте илсе кĕтĕм. (Илпек Микулайĕ.)

1) *Аманнă шурă кăвакарчăна тупни.*
2) *Кăвакарчăнăн аманнă çунатне сыватни.*
3) *Кăвакарчăн сывални, алла иленни.*
4) *Çу кунĕсенче.*

а) 1, 2, 3, 4 б) 3, 4, 1, 2
ă) 4, 1, 3, 2 в) 4, 3, 1, 2

**2. Пăтраштарнă пайсенчен план тăрăх çыхăнуллă текст йĕркелĕр. Сĕннĕ плансенчен хăшĕ тĕрĕс пулнине палăртăр.**

(1) Эпир хĕрсе урпа выратпăр. Пĕшкĕнме те, пĕшкĕнсен çĕкленме те çук – пилĕк ыратать. Пуçа тĕрлĕ шухăш килсе кĕрет.

(2) Вара эпир хире, çуртри пуссиневаскарăмăр. Хĕвел те тухса сарăлчĕ, хăйĕн хĕрӳ хĕлхемĕсене çĕре сапалать.

(3) Куç уçăлмасть, чăтма çук сывăрас килет. Анчах ним тума та çук – тăмаллах. Картишĕнче лаша кӳлсе тăратнă, пире кĕтет. Маюк аппа çыхă тумалли кĕлтесем йĕпетрĕ, хирте çиме хăяр татса кĕчĕ.

(4) Шуралса шурăмпуç хăпарать. Хутран-ситрен автансем авăтни илтĕнсе каять. Пăхатăп та – куç вĕçĕнче анне тăра парать, мана тутлă ыйхăран вăратать. (В. Давыдов-Анатри.)

1) *Ирхине анне вăратни.*
2) *Хире кайма хатĕрленни.*
3) *Хире тухса кайни.*
4) *Урпа вырни.*

а) 3, 4, 2, 1　　б) 4, 2, 3, 1
ă) 1, 2, 3, 4　　в) 4, 3, 2, 1

**3. Пăтраштарнă пайсенчен план тăрăх çыхăнуллă текст йĕркелĕр. Сĕннĕ плансенчен хăшĕ тĕрĕс пулнине палăртăр.**

(1) Йĕпе-сапа кĕр çитрĕ. Шартлама сивĕ, юрлă, тăманлă хĕл çитрĕ. Çырмари юхан шыв хулăн пăрпа, хирсемпе çарансем шап-шурă юрпа витĕнчĕç. Мĕнрен пулаççĕ-ха пăрпа юр?

(2) Пăр шывра путмасть, вăл шывран çăмăлрах. Çуркунне пăр кайнă чухне шывра пăр катăкĕсем çиелте ишсе пыраççĕ.

(3) Пăр, кĕленче пек, витĕр курăнать, çўхе пăрăн тĕсĕ çук. Хулăн пăр симĕсрех е сенкертерех курăнать.

(4) Хĕлле пăр çинче конькпипе ярăнма аван. Вăл яка. Пăр катăкне мăлатукпа çапсан вăл вакланса тĕпренет.

(5) Сывлăшра яланах шыв пăсĕ пур. Çанталăк сивĕтсен çав пăсран юр пĕрчисем пулаççĕ. Сивĕ çанталăкра шывран пăр пулать. (В. Ефимов.)

1) *Йĕпе-сапа кĕр хыççăнхи шартлама сивĕ хĕл.*
2) *Пăр мĕнрен пулни.*
3) *Пăр тĕсĕ.*
4) *Пăр шывран çăмăлрах пулни.*
5) *Пăр яка пулманни.*

а) 1, 5, 3, 2, 4　　б) 1, 2, 3, 5, 4
ă) 1, 3, 2, 5, 4　　в) 1, 2, 3, 4, 5

## 2.4.4. Калаçу чӗлхи. Илемлӗ чӗлхе. Официаллӑ чӗлхе

1. Вуласа тухăр. Текста мӗнле чӗлхепе çырнине палăртăр.

*- Эппин, Тăрна шурӗпе мӗн тăватпăр? - çаплах каялла чакмарӗ Пантюхин.*

*- Кайран! Кайран! – алне сулчӗ Удейкин.*

*- Çук, апла хăтланнипе нимӗн те пулмасть.*

*- Пулать! – пăрăç хӗртнӗ, вӗтеленӗ чухнехи пекех питне пӗркелентерчӗ председатель.*

*- Тăрна шурӗнче, ман шутпа, халех ӗçе тытăнмалла. Çак кунсенчех.*

*- Ан калаç-ха çавăн çинчен. Çитет!*

*- Çук, çитмест. (В. Алентей.)*

а) калаçу чӗлхи б) официаллă чӗлхе

ă) илемлӗ чӗлхе в) публицистика чӗлхи

2. Вуласа тухăр. Текста мӗнле чӗлхепе çырнине палăртăр.

*Акă, кӗтмен çӗртен, хуп-хура тункатасем хыçӗнчен пылчăклă-мӗнлӗ, вараланчăк питлӗ Пантюхин килсе тухрӗ. Вăл, пысăк чул йăтнăскер, асăрхаймарӗ, ăна такам, мăнтăрскер, пырса перӗнчӗ. Иван пуçне ялт çӗклерӗ, хăй умӗнче самай пысăк хырăмлă, кӳпшек питлӗ Удейкин тăнине курчӗ. Вӗсем иккӗшӗ те пӗрне-пӗри куçран тинкерчӗç. (В. Алентей.)*

а) калаçу чӗлхи б) официаллă чӗлхе

ă) илемлӗ чӗлхе в) публицистика чӗлхи

3. Вуласа тухăр. Текста мӗнле чӗлхепе çырнине палăртăр.

*Ача аллине шăрпăк ан лектӗр тесе шикленет аппӗ-амăшӗ. Анчах та шăпăрлан аллине граната та лекме пултарать иккен. Муркаш районӗнчи Ятман шкулӗнче вӗренекен шкул ачисем кивӗ сарай маччинче граната тупнă, унпа выляма пуçланă. Мото-*

*циклпа иртсе пыракан аслӑ класра вӗренекен каччӑ ачасен аллинче граната асӑрхасан ӑна илет те ялтан аяккарах тухса ывӑтать. Сирпӗннӗ хыҫҫӑн ҫуртсенчи чӳрече кантӑкӗсем чӗтреннӗ. Никам та сусӑрланман.* (*О. Нестерова. «Хыпар» хаҫатран.*)

а) калаҫу чӗлхи б) официаллӑ чӗлхе
ӑ) илемлӗ чӗлхе в) публицистика чӗлхи

**4. Вуласа тухӑр. Текста мӗнле чӗлхепе ҫырнине палӑртӑр.**

*(...) 2. Пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан учрежденисен пурлӑхпа техника никӗсне палӑрмаллах ҫӗнетмелле, ҫав шута пӗрремӗш класа ҫӳрекен кашни ачанах хальхи йышши сӗтел-пуканпа, шкул столовӑйӗсене – энерги перекетлекен пысӑк технологиллӗ оборудованипе тивӗҫтерессипе тата библиотека фондне вырӑсла-чӑвашла илемлӗ тата информаци-справка литературисемпе самаях ҫӗнетесси те кӗрет.* (*«Хыпар» хаҫатран.*)

а) калаҫу чӗлхи б) официаллӑ чӗлхе
ӑ) илемлӗ чӗлхе в) публицистика чӗлхи

**5. Текста вуласа тухӑр та ун хыҫҫӑн панӑ ӗҫсене тӑвӑр.**

*(1)Тухсанах кӑн-кӑвак пысӑк самосвал курчӗ вӑл, хыҫне ҫинҫе трос кӑкарнӑ. (2)Турӑҫӑм, хӑйсен хӗп-хӗрлӗ «Москвичӗ» самосвал хыҫӗнче ларать-ҫке. (3)Малти пайӗ йӑлтах арканнӑ ун, ҫиелти хуппи те сулланса ҫеҫ тӑрать. (4)Ак инкек... (5)Юрать-ха Ҫеменӗ сывӑ. (6)Вӑл, авӑ, машинӑран тухса пӗшкӗнчӗ, кӑкарнӑ тросне вӗҫертрӗ.* (*А. Емельянов.*)

1) **Текста мӗнле чӗлхепе ҫырнине палӑртӑр.**

а) калаҫу чӗлхи б) официаллӑ чӗлхе
ӑ) илемлӗ чӗлхе в) публицистика чӗлхи

2) Текстри хутлă предложенисене тупăр.

а) 2 ӑ) 1, 6 б) 1, 3 в) 3, 6

3) Хутлă предложенисен пайĕсем мĕнпе çыхăннине палăртăр.

а) интонаципе
ӑ) союзпа
б) интонаципе; союзпа
в) аффикспа; интонаципе

**6. Текста вуласа тухăр та хушнă ĕçсене тăвăр.**

*(1)Пĕве хыçне ашшĕ вăрçăччен икĕ рет йăмра лартса тухнăччĕ. (2)Халь вĕсем ватăлса кайнă, дамбăран курăнакан турачĕсем те пўрт пуралама юрăхлă. (3)Йăмрасен айне иртĕхмеллех ўссе кайнă вĕлтĕренпе куршанак сырса илнĕ. (4)Пĕве пуçне хăва тĕмисем хўтĕлеççĕ. (5)Хўтĕлеме хўтĕлеççĕ те, çапах хумсем çырана ишĕлтересшĕн. (А. Емельянов.)*

1) Текста мĕнле чĕлхепе çырнине палăртăр.

а) калаçу чĕлхи
ӑ) илемлĕ чĕлхе
б) официаллă чĕлхе
в) публицистика чĕлхи

2) Текстри хутлă предложенисене тупăр.

а) 2, 3 ӑ) 3, 4 б) 3, 5 в) 2, 5

3) Хутлă предложенисен пайĕсем мĕнпе çыхăннине палăртăр.

а) интонаципе
ӑ) союзпа
б) интонаципе; союзпа
в) союзпа; аффикспа

**7. Текста вуласа тухăр та хушнă ĕçсене тăвăр.**

*(1)Алăк уçăлчĕ те, пўрте сивĕ сывлăш шурă путек кĕтĕвĕ пек капланса тулчĕ, урай тăрăх саланса кайрĕ. (2)Кĕске кĕрĕк тăхăннă Кĕçтук пĕр çĕклем ву-*

*тă çĕклесе кĕчĕ, хăна çинелле пăхса çĕклеме кăмака умне хуллен хучĕ.*

*(3) – Уçăлмалла тухса кăштах вутă çуртăм, - терĕ вăл. (4)Унăн пичĕ юн пĕрĕхес пек хĕрелнĕ.* (*А. Артемьев.*)

**1) Текста мĕнле чĕлхепе çырнине палăртăр.**

а) калаçу чĕлхи    б) официаллă чĕлхе
ă) илемлĕ чĕлхе    в) публицистика чĕлхи

**2) Текстри хутлă предложенисене тупăр.**

а) 1, 2    ă) 2, 3    б) 3    в) 1, 4

**3) Хутлă предложенисен пайĕсем мĕнле çыхăннине палăртăр.**

а) интонаципе    б) интонаципе; союзпа
ă) союзпа, хыç сăмахпа    в) союзпа; аффикспа

### 2.4.5. Сăнлав. Калав. Ăслав

1. Панă текстăн тĕсне палăртăр.

*Шуршăл çав тери хитре вырăнта вырнаçнă. Сăрт çинче те, сăрт айккинче те çуртсем. Ял урамĕсем тирпейлĕ, ешĕл йăмраллă. Çывăхрах çырансемпе улăхсем, вăрман. Çавал шывĕ те ял çумĕпех юхса выртать.* (*Ю. Мишши.*)

а) ăслав;    б) калав;
ă) сăнлав;    в) пĕри те тĕрĕс мар.

2. Панă текстăн тĕсне палăртăр.

*Ачасем ашшĕ пахчана укçа пытарса хунă пулĕ тесе шухăшланă. Вĕсем ашшĕ вилсен пĕтĕм пахчине чавса шыранă, ура пусмалăх вырăн та хăварман. (Чăваш халăх юмахĕнчен.)*

а) ăслав　　　　　　б) калав
ă) сăнлав　　　　　　в) калавпа сăнлав

**3. Панă текстăн тĕсне палăртăр.**

*Чакак этеме, çут çанталăка самаях усă кÿрет. Уй-хирте, вăрманта вăл шăшисем нумай тытать. Хуртсем, нăрăсем, çав шутра тыр-пулшăн питĕ сиенлисене те, чылай пĕтерет.* (*Ю. Мишши.*)

а) ăслав　　　　　　б) калав
ă) сăнлав　　　　　　в) пĕри те тĕрĕс мар

**4. Текста вуласа тухăр та ĕçсене тăвăр.**

*1. Çу уйăхĕн пуçламăшĕнче аслати хавассăн кĕрлеттерсе ячĕ те, пĕтĕм чĕрĕ чун шавлама пуçларĕ. 2. Вăрман тĕрлĕ сасăпа тулчĕ, унта çу уйăхĕ янăравлăн пырса кĕчĕ. 3. Мĕн тери ырă! 4. Мĕн сасă пама пултарать, çавă пурте хаваслăн кĕрлесе тăрать. 5. Таçта тĕксĕм кăмăллă чĕмсĕр тăманасем мăкăртатнă сасă илтĕнет. 6. Унтах хăравçă мулкачсем хăюллăн та хыттăн кăшкăраççĕ. 7. Вăрманта (1) лапкăшĕпех шăхăрни (2) çуйхашни (3) шаккани (4) юрлани (5) мĕкĕрни илтĕнсе тăрать. 8. Пĕр йышши юрăсене вăрмана аякри кăнтăртан вĕçсе çитнĕ кайăксем хăйсемпе пĕрле илсе килчĕç, теприсем вырăнтах çуралчĕç. 9. Çав юрăсем вăраха кайнă уйрăлу хыççăн пĕр-пĕринпе тĕл пулчĕç те савăнăçа ниçта чикеймесĕр ирхи шуçăмран пуçласа каçхи шуçăмччен чарăнмасăр янăрарĕç.*

*10. Ăшăнса пăсланакан чăтлăхсенче, юр ирĕлсе пĕтнĕ пирки пĕчĕк юхан шывсем çиллессĕн шăнкăртатаççĕ. 11. Шыв тĕкĕрĕ çинче хăйсен сăнне ылтăн хăвасем тинкереççĕ, пĕр çырантан тепĕр çыран çине шурă чечекпе витĕннĕ çĕмĕртсем чĕлтĕр-чĕлтĕр кĕпер хываççĕ.*

*12. Аслатиллĕ çумăр паçăрах иртсе кайнă, анчах хурăнсем çинче пĕр çулçăран тепĕр çулçă çине, картлашкаран картлашкана тумланă пек, ашкăнчăк*

*çумăр пĕрчисем сикеççĕ. 13. Вĕсем çулçă вĕçĕнче хăранипе чĕтре-чĕтре çакăнса тăраççĕ те йăлтăр-ялтăр çиççе кÿлленчĕке ÿкеççĕ.*

*14. Çĕр çинче хĕл каçнă пĕркеленчĕк типĕ çулçăсем те пулин чĕрĕлнĕ: е çĕр çийĕн шăши пек кăштăртатса чупаççĕ, е, кайăк кĕтĕвĕ пек, сывлăша çĕкленеççĕ.*

*15. Пур çĕрте те: хирсемпе вăрмансенче те, тÿпере те, шывра та, çĕр айĕнче те – çурхи сасăсем илтĕнеççĕ.*

*16. Кĕрлет çурхи тĕнче, шавлать! (Н. Сладков çырнинчен.)*

**1) Текстăн тĕсне палăртăр.**

а) ăслав б) калав
ă) сăнлав в) калавпа сăнлав

**2) Кăтартнă предложенисенчен хăшĕ сыпăнуллă хутлă пулать?**

а) 4 ă) 1 б) 2 в) 8

**3) 7-мĕш предложение вуласа тухăр. Хăш цифрăсем предложенире запятойсемпе тÿр килеççĕ?**

а) 1,2,3,4 ă) 2,3,4 б) 2,3,4,5 в) 3,4,5

**4) Определени ушкăнне кĕрекен пăхăнуллă пай хăш предложенире тĕл пулать?**

а) 5 ă) 6 б) 7 в) 8

**5) 11-14-мĕш предложенисенчен хăшĕнче уйрăмлатнă пуплев сыпăкне запятойсем лартса уйăрнă?**

а) 13 ă) 12 б) 14 в) 11

**6) Сăмах(сем) тĕп предложение кĕнине кăтартма хăш предложенире запятой лартнă?**

а) 10 ă) 11 б) 12 в) 4

5. Текста вуласа тухăр та палăртнă ĕçсене тăвăр.

*1. Виççĕн кăмпа татаççĕ: амăшĕ тата аслă ывăлĕпе арăмĕ.*

*2. Çăра та лăс-лăс çулçăллă ачаш симĕс çăкасем (1) шур пике пек хурăнсем (2) ĕмĕр симĕс хырсемпе чăрăшсем (3) кăмпаçăсене ытла та хапăл кĕтсе илчĕç. 3. Пурте кĕтнĕ çумăр хыççăнхи тĕнче ытармалла мар. 4. Нумаях пулмасть кăна – тăвăллăн шавласа çумăр шăпăртатрĕ. 5. Çиçĕм вăрăм пушă пек тăсăлса кайса пĕлĕт патшалăхне çурса ярасла тĕнчене çутатрĕ, siксе чĕтресе ялтăртатрĕ те, аслати кĕмсĕртеттерчĕ. 6. Çумăрĕ вара, çумăрĕ! 7. Такама лаплаттарса çапас килнĕнех чарăнми чашлаттарчĕ вăл. 8. Чылай вăхăтран тин, аслати сасси вăйсăрлансан çумăр лăпланчĕ.*

*9. Чылайранпа хăрса-типсе ларнă ўсен-тăран пĕлĕт куççульне тем пекех кĕтнĕччĕ çав, мăнтарăн, унăн чĕрĕлĕх сиплĕхĕ пĕтсе пыратчĕ. 10. Епле вăхăтлă килчĕ çумăр-çăлăнăç! 11. Паян ав ылтăн тĕс çапнă çĕр пичĕн эрешĕ, ирхи хĕвел пайăрки, кунти чечексене чуп тăвать. 12. Чĕрĕлĕх сĕткенĕ ĕмсе тăраннă чечек-курăк тутлăхра. 13. Кĕмĕл пĕрчĕсем çулçăсем çийĕн йăпăртатса чупаççĕ, хĕвел сăннипе тавлашнăн ăмăртмалла çиçеççĕ. 14. Тăпра та хăйне çапла шăварса чĕрĕлĕх панăшăн хĕпĕртесе пур йывăç-курăка, тырă-пула пуласлăх пиллет. 15. Чăннипех те нĕрлĕх анлăшĕ яриех уçăлса кайнă çĕр аннемĕрĕн. 16. Ирпеле шăрçаланса та йăлтăртатса тухса карталаннă пĕлĕт кĕперĕ çине пăхса тăма мĕн тери ырă! 17. Çав кĕпер тăрăх, çўлтен аялалла тинкерсе, утса иртес килет.*

*18. Кăмпаçăсемшĕн кун килчĕ, чăнах та: аслă çĕр пичĕн вăрманлă пĕр лапĕнче çăлтăр пекех тухса ларнă чăмăркка уплюнккасем. 19. Тат та ил, кас та хур ытарайми мăнтăрккасене карçинккана. (А. Михайловпа В. Левуков çырнинчен.)*

**1) Текстăн тĕсне палăртăр.**

а) ăслав б) калав
ă) сăнлав в) калавпа сăнлав

**2) Кăтартнă предложенисенчен хăшĕ сыпăнуллă хутлă пулать?**

а) 14 ă) 13 б) 9 в) 5

**3) 2-мĕш предложение вуласа тухăр. Хăш цифрăсем предложенире запятойсемпе тӳр килеççĕ?**

а) 1,2,3 ă) 1,2 б) 2,3 в) 1,3

**4) Определени ушкăнне кĕрекен пăхăнуллă пай хăш предложенире тĕл пулать?**

а) 3 ă) 4 б) 5 в) 6

**5) 11-14-мĕш предложенисенчен хăшĕнче уйрăмлатнă пуплев сыпăкне запятойсем лартса уйăрнă?**

а) 14 ă) 13 б) 11 в) 12

**6) Сăмах(сем) тĕп предложение кĕнине кăтартма хăш предложенире запятой лартнă?**

а) 7 ă) 8 б) 9 в) 10

**6. Текста вуласа тухăр та палăртнă ĕçсене тăвăр.**

*1. Мулкачкассинче халĕ пĕр вăтăр кил пулĕ. 2. Ĕлĕкрех пысăкрах йышпа карталанса ларнă-тăр вĕсем. 3. Кайран, хуласем мăнăланса, ялсем пĕчĕкленсе пыма тапратсассăн вăл сайралса юлнă. 4. Паян унта та кунта (1) вĕлтрене хупах пуснă кил вырăнĕсем (2) яланлăхах питĕрĕннĕ хăртăк-хартăк (3) ӳпĕнчĕк пӳртсем курăнкалаççĕ.*

*5. Ялĕ капăр çĕре вырнаçнă вара. 6. Пĕр урамĕ хыçĕпе тăп-тăрă юхан шыв, Çăрттан ятлăскер, шăнкăртатса иртет. 7. Ун авкаланчăкĕ тăршшĕпех йĕре хăвасем тураттисене шывалла хурлăн пĕксе ӳсеççĕ. 8.*

*Кассăн-кассăн хура çирĕксем хунаса кайнă. 9. Тепĕр урам хыçĕнче çавра пĕве тĕкĕрĕ çуталса выратать, ăна та йĕри-тавраллах йăвă хăмăш-хăях çавăрса илнĕ. 10. Унран çур çухрăмранах ăвăслă-юманлă хутăш вăрман хупăрланса тăрать. 11. Ял пуçĕнчен леререх тата вăрмансем кашласа лараççĕ. 12. Хайхи леш Çăрттан шывĕ те таçтан вĕсен варринченех йăрлатса тухать. 13. Çăра йывăçлăхран чашкăрса аннăранах-тăр ун шывĕ пăтранчăк мар та, тарăнрах авăр тĕпĕ те янкăрах курăнать ав. 14. Кунашкал таса юхан шыв питĕ сайра тĕл пулать хальхи вăхăтра. 15. Ахальтен-и унта çăрттанĕ çеç мар, уланкă та, хура пулă та ĕрчет.*

*16. Ял таврашĕнчи кашни кукăртах чĕвĕлти кайăксем янкăс юрă-çемĕ шăрантараççĕ. 17. Вут-шанкă та, утă-курăк та, кăмпа-çырла та лăках-тăр унта. 18. Пĕр шухăшсăр пурăнмалла ĕнтĕ этемĕн çакнашкал илемлĕ те тулăх кĕтесре. 19. Анчах темĕн çитмест çынсене: çак çăтмахри пек ырлăхран та темскер шырама тухса каяççĕ.* (*В. Петров çырнинчен.*)

1) Текстăн тĕсне палăртăр.

а) ăслав  б) калав
ă) сăнлав  в) калавпа сăнлав

2) Кăтартнă предложенисенчен хăшĕ сыпăнуллă хутлă пулать?

а) 15  ă) 13  б) 19  б) 12

3) 4-мĕш предложение вуласа тухăр. Хăш цифрăсем предложенире запятойсемпе тӳр килеççĕ?

а) 1,2,3  ă) 1,2  б) 2,3  в) 1,3

4) Определени ушкăнне кĕрекен пăхăнуллă пай хăш предложенире тĕл пулать?

а) 4  ă) 5  б) 6  в) 7

5) 6-9-мӗш предложенисенчен хӑшӗнче уйӑрмлатнӑ пуплев сыпӑкне запятойсем лартса уйӑрнӑ?

а) 9 ӑ) 8 б) 7 в) 6

6) Сӑмах(сем) тӗп предложение кӗнине кӑтартма хӑш предложенире запятой лартнӑ?

а) 2 ӑ) 3 б) 4 в) 5

7 Текста вуласа тухӑр та палӑртнӑ ӗҫсене тӑвӑр.

*1. Ӗҫ хыҫҫӑн эпӗ уҫӑлса ҫӳрес тесе хула садне тухса утрӑм. 2. Акӑ халь аллея тӑрӑх пыратӑп та, мана сип-симӗс ҫи-пуҫ тӑхӑннӑ йывӑҫсем шӑппӑн алӑ ҫупса саламланӑн туйӑнать. 3. Тӗрлӗрен кайӑк юррисем хӑлхаран тухма пӗлмеҫҫӗ. 4. Хӗвел хӑйӗн ылтӑн пайӑркисемпе йывӑҫсем витӗр ҫул хывса сада ытарайми сӑн кӗртет. 5. Чипертен те чипер хӗр пек илемлӗ тавралӑх... 6. Умри Атӑл, ҫурхи шывпа тулнӑскер, инҫете сарӑлса выртать. 7. Унӑн хумӗсем ҫурҫӗр енчен вӑштӑр-вӑштӑр вӗрсе иртен сулхӑн ҫилпеле умлӑн-хыҫлӑн пӗр вӗҫӗмсӗр ку еннелле кумаҫҫӗ. 8. Шап-шурӑ пӑрахут ирӗккӗн те мӑнаҫлӑн анать туран. 9. Халӑх хӗвӗшекен ҫыран хӗрринче, хула сачӗпе тӗлме-тӗл вырнаҫнӑ шыв станцийӗнче, пӗр ҫамрӑк икӗ аллине чӗкеҫле сарса вышка ҫинчен шыва чӑмать. 10. Акӑшсем пек чӑлт шурӑ тумланнӑ ҫамрӑксем кимӗсемпе талккӑшӗпех ярӑнаҫҫӗ. 11. Атӑл ҫинче, яш кӗрӗм хавасланнӑ вӑхӑтра хут купӑс кӗвви, ҫӗкленӳллӗ те савӑнӑҫлӑ юрӑ янӑраса тӑрать. 12. Леш енчен, вӗҫӗ-хӗррисӗр тӑсӑлса выртакан улӑх хыҫӗнчен, ҫук, татах та леререхрен, кӑвак тӗтрепе витӗннӗ инҫетлӗхренех, мамӑк пек шупка пӗлӗтсем капанӗ капанӗпе кӑтраланса тӳпенелле кармашаҫҫӗ. 13. Вӗсем (1) вӑрӑм ҫула тухнӑ евӗр (2) хӗвел тухӑҫнелле (3) ерипен шӑваҫҫӗ. 14. Улӑхри лаша кӗтӗвне аса илтереҫҫӗ.* (*А. Медведев ҫырнинчен.*)

1) Текстăн тĕсне палăртăр.

а) ăслав    б) калав
ă) сăнлав    в) калавпа сăнлав

2) Кăтартнă предложенисенчен хăшĕ сыпăнуллă хутлă пулать?

а) 11    ă) 2    б) 8    в) 7

3) 13-мĕш предложение вуласа тухăр. Хăш цифрăсем предложенире запятойсемпе тӳр килеççĕ?

а) 1,2,3    ă) 1,2    б) 2,3    в) 1,3

4) Определени ушкăнне кĕрекен пăхăнуллă пай хăш предложенире тĕл пулать?

а) 7    ă) 8    б) 9    в) 10

5) 5-8-мĕш предложенисенчен хăшĕнче уйрăмлатнă пуплев сыпăкне запятойсем лартса уйăрнă?

а) 5    ă) 7    б) 8    в) 6

6) Сăмах(сем) тĕп предложение кĕнине кăтартма хăш предложенире запятой лартнă?

а) 10    ă) 11    б) 12    в) 13

## ХУРАВСЕМ

**II.** Пĕлĕве тĕрĕслемелли тестсем.....................................................7

**2.1. Хутлă предложенин пĕтĕмĕшле ыйтăвĕсем**....................7

1) ă; 2) б; 3) ă.

**2.2. Хутлă предложени тĕсĕсем**..................................................7

1) ă; 2) б; 3) ă; 4) а; 5) ă; 6) б; 7) а; 8) ă; 9) б; 10) ă; 11) а; 12) б; 13) а; 14) б; 15) ă; 16) а; 17) б; 18) а; 19) ă; 20) ă; 21) б; 22) б; 23) в; 24) ă; 25) ă; 26) в; 27) ă; 28) б; 29) а; 30) б; 31) б; 32) в; 33) б; 34) б; 35) б; 36) а; 37) ă; 38) а; 39) а; 40) ă; 41) ă; 42) б; 43) б; 44) ă; 45) в; 46) ă; 47) а; 48) в; 49) ă; 50) б; 51) б; 52) в; 53) а; 54) б; 55) ă; 56) б; 57) а; 58) б; 59) а; 60) б; 61) в; 62) а; 63) б; 64) в; 65) б; 66) в; 67) б; 68) ă; 69) а; 70) б; 71) ă; 72) б; 73) ă; 74) б; 75) а; 76) б; 77) б; 78) а; 79) б; 80) б; 81) в; 82) 1; 83) 1; 84) 1; 85) 1; 86) 1; 87) 3; 88) 1; 89) 1; 90) 1; 91) 1; 92) 1; 93) 1; 94) 2; 95) 1; 96) 1; 97) 4; 98) 1; 99) 1; 100) 3; 101) 1; 102) 3; 103) 3; 104) 2.

**2.3.** Пунктуаци..........................................................................34

1) б; 2) ă; 3) а; 4) ă; 5) в; 6) ă; 7) в; 8) ă; 9) ă; 10) ă; 11) в; 12) ă; 13) б; 14) ă; 15) в; 16) ă; 17) а; 18) ă; 19) в; 20) ă; 21) ă; 22) ă; 23) ă.

**2.4. Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси**....................................43

**2.4.1. Текст. Унăн пайĕсем**............................................................43

1) ă; 2) а; 3) б; 4) б; 5) а; 6) ă.

**2.4.2. Текст теми, тĕп шухăшĕ**.....................................................45

1) в; 2) ă; 3) в.

**2.4.3. Текст планĕ**.........................................................................47

1) ă; 2) в; 3) а.

**2.4.4. Калаçу чĕлхи. Илемлĕ чĕлхе. Официаллă чĕлхе**.........................................................................................50

1) а; 2) ă; 3) в; 4) б; 5) 1-а; 2-б; 3-а; 6). 1-ă; 2-в; 3-б; 7) 1-ă; 2-в; 3-ă.

**2.4.5. Сăнлав. Калав. Ăслав**..........................................................53

1) ă; 2) б; 3) а; 4) 1-в; 2-ă; 3-б; 4-а; 5-ă; 6-а; 5) 1-в; 2-в; 3-ă; 4-а; 5-б; 6-ă; 6) 1-в; 2-ă; 3-б; 4-а; 5-в; 6-ă; 7) 1-в; 2-ă; 3-ă; 4-б; 5-в; 6-ă.

## ТУПМАЛЛИ


Умӗн калани....................................................................3

I. Тест – пӗлӗве тӗрӗслемелли тухӑҫлӑ мел........4

II. Пӗлӗве тӗрӗслемелли тестсем............................7

2.1. Хутлӑ предложенин пӗтӗмӗшле ыйтӑвӗсем.....7

2.2. Хутлӑ предложени тӗсӗсем.................................7

2.3. Пунктуаци.......................................................34

2.4. Ҫыхӑнуллӑ пуплеве аталантарасси...............43

2.4.1. Текст. Унӑн пайӗсем...................................43

2.4.2. Текст теми, тӗп шухӑшӗ...........................45

2.4.3. Текст планӗ.................................................47

2.4.4. Калаҫу чӗлхи. Илемлӗ чӗлхе.

Официаллӑ чӗлхе.............................................50

2.4.5. Сӑнлав. Калав. Ӑслав...............................53

Тестсен хуравӗсем...............................................61

Учебное издание

Андреева Евдокия Александровна

# Синтаксис сложного предложения

Учебно-методическое пособие

Для студентов факультета чувашской филологии

Подписано в печать 30. 10. 09.
Формат 60x84/16. Печать оперативная. Бумага писчая.
Усл. печ. л. 4,0. Тираж 100 экз. Заказ № 984.

ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический
университет имени И. Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

Отпечатано на участке оперативной полиграфии
ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический
университет имени И. Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38